28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
4
ШАМАТКУН
176(6413) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ВАТУТИНА

Паян, сентябрӗн 2-мӗшӗнче, Воронеж фронтӗнчи ҫарсем ҫапӑҫса Украина облаҫӗн паха центрне—СУМЫ хулине йышӑнса илнӗ.

Сумы хулине нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларасшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче ЧИБИСОВ генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем, пуринчен те ытларах ЗУБАРЕВ полковникӑн 340-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорӑн 167-мӗш стрелковӑй дивизийӗ тата УЛИТИН генерал-майорӑн 232-мӗш стрелковӑй дивизийӗ уйрӑмах палӑрнӑ.

Ҫак ҫӗнтерӗве палӑртас майпа 340-мӗш, 167-мӗш тата 232-мӗш стрелковӑй дивизисене „Сумски" тесе ят парас, вара малашне вӗсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

340-мӗш Сумски стрелковӑй дивизи,
167-мӗш Сумски стрелковӑй дивизи,
232-мӗш Сумски стрелковӑй дивизи.

Паян, сентябрӗн 2-мӗшӗнче, 20 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици Мускав Сумы хулине илнӗ пирӗн паттӑр ҫарсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе 124 тупӑран 12 хут пӗр харӑс персе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн тата хӑюллӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, Сумы хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусене хутшӑннӑскерсене, тав тӑватӑп.

Пирӗн Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи сентябрӗн 2-мӗшӗ.

Колхозсенчи ревизи комиссийӗсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи задачисем

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра колхозсен социализмлӑ пурлӑхӗпе пуянлӑхне сыхлас ӗҫе, колхозсенче хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплина тытса пырас ӗҫе чи малти вырӑна хумалла.

Колхозра ялхуҫалӑх ӗҫӗсен ҫулталӑкри итогӗсем тӑрӑх тунӑ ревизисенче тата кашни кварталта тӑвакан черетлӗ ревизисенче те, пуринчен ытла, колхозӑн пурлӑхӗ мӗнле сыхланса тӑнине, колхоз государство умӗнчи обязательствӑсене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине, Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ мӗнле хывса пынине, колхозра тырпулпа ытти продуктсене мӗнле упраса усранине, колхозниксем ӗҫкунӗсен минимумне мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынине, тырпул тухӑҫлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне планран ирттерсе ӳстернӗшӗн колхозниксене хушса тӳлес йӗркене мӗн чухлӗ тӗрӗс пурнӑҫласа пынине тимлӗн сӑнаса, тӗрӗслесе тӑмалла.

Колхозсенчи ревизи комиссийӗсем ӗҫри ҫитменлӗхсене вӑхӑтра курса, вӗсене хӑвӑрт пӗтермелли мерӑсем йышӑнни колхозниксене тӑван ҫӗршывпа хамӑрӑн тӑван ҫарӑшӑн татах та тимлӗрех ӗҫлеме, уборка ӗҫӗсене хӑвӑртрах вӗҫлессишӗн кӗрешме хавхалантарать.

Вӑрмар районӗнчи колхозсем тырӑсем вырса пӗтерчӗҫ. Тырпулсене ӑнӑҫлӑн вырса пӗтерни Вӑрмар районӗнчи колхозсен правленийӗсемпе ревизи комиссийӗсем умра тӑракан задачӑсене вӑхӑтра тимлӗн пурнӑҫа кӗртсе пынинчен те килчӗ. Вӑрмар районӗнче 1942-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗнчи ӗҫсен отчетне вӑхӑтра туса, колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса панӑ. Колхозсенчи ревизи комиссийӗсем кашни колхозник ӗҫре дисциплинӑна мӗнле тытнине, ӗҫкунӗсен минимумне мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынине тӗрӗслесех тӑраҫҫӗ, ӗҫре йӗркелӗхпе сыхӑлӑха сӑнаса пыраҫҫӗ.

Первомайски районра вара йӑлтах урӑхла. Ку районри чылай колхозсен шалти ӗҫӗсенче йӗркесӗрлӗх нумай. Ревизи комиссийӗсем колхоз правленийӗсен ӗҫне кулленех тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ, ҫакӑ вара ҫитменлӗхсене вӑхӑтра сирсе, ӗҫе хӑвӑрт тӳрлетме май памасть. Колхозсем 1943 ҫулта приходпа расход сметине туни ҫинчен район Наркомзема халӗ те отчет таратман.

Колхозсенчи ревизи комиссийӗсен ӗҫне ҫӗнетсе лайӑхлатас тӗлӗшпе ЧАССР Наркомземӗн колхозсенчи организациллӗ ӗҫсен пайӗ те (начальникӗн ӗҫӗсене тӑвакан И. Косминский, агрономӗ Т. Васильев юлташсем) нимех те туман. 1942 ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсем тӑрӑх хӑшпӗр районсем халӗ те ҫулталӑкри отчетсене таратман, 1943 ҫулта ӗҫлеме приходпа расход сметисене 9 районри колхозсенче туса пӗтермен, ӗҫкунӗсен минимумне пурнӑҫа кӗртсе пыни ҫинчен пӗрремӗш срокӑн итогне те халӗ 16 районри колхозсенчен ҫеҫ илнӗ.

Уборка ӗҫӗсене вӗҫлес тапхӑрта колхозсенче тырпула тӑккаланипе кӗрешесси—пысӑк та ответлӑ ӗҫ. Тырпула тӑккалани—тӑван ҫӗршыва сиен кӳни пулать. Колхозсенчи ревизи комиссийӗсем тырра сыхласа упрас тӗлӗшпе государство умӗнче ответлӑ пулмалла. Тырӑ тӑккаланнӑшӑн айӑплӑ ҫынсене, ҫакӑнпа кӗрешессине хакламан руководительсене ҫийӗнчех ответ тыттармалла.

1943 ялхуҫалӑх ҫулӗ вӗҫленесси нумай юлмарӗ. Колхозсенчи ревизи комиссийӗсен хӑйсен ӗҫне тӗпренех лайӑхлатмалла. Ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗ тӑрӑх кашни виҫӗ уйӑхрах колхозра ревизи туса иртермелле. Анчах ҫакна халӗ хӑшпӗр колхозсенчи ревизи комиссийӗсем пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ-ха. Ревизи комиссийӗсен составне тӳрӗ кӑмӑллӑ колхозниксене суйласа лартмалла. Ревизи ӗҫне ҫӗнӗрен кӗнӗ ҫынсене тимлӗн вӗрентмелле, халӑх пурлӑхне сыхлас ӗҫӗн пысӑк ответлӑхне ӑнлантарса памалла.

Ревизи комиссийӗсенче ӗҫлекен колхозниксен квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе СССР Наркомземӗ облаҫсемпе автономлӑ республикӑсенчи Наркомземсене районсенче колхозсенчи ревизи комиссийӗсен членӗсене пухса кӗске срокла конференцисем туса иртерме хушнӑ. ЧАССР Наркомземӗ ку тӗлӗшпе те 1943 ҫулта нимех те туман-ха.

Ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсене пӗтӗҫтерме хатӗрленмелле. Ревизи комисси членӗсен колхоз правленийӗсен ӗҫне ҫивӗчӗ куҫпа тӗрӗслесе тӑмалла, ҫитменлӗхсене вӑхӑтра курса пӗтерсе пымалла, отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи виҫҫӗмӗш ялхуҫалӑх ҫулне отлично вӗҫлессишӗн фронтри паттӑр боецсем пек кӗрешмелле.

Государствӑна—пахча-ҫимӗҫ

КАНАШ. Сиккассинчи Шмидт ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна обязательство шучӗпе 13 центнер кишӗр, 16 центнер сухан, тата ытти пахча-ҫимӗҫсем те панӑ. Пахча-ҫимӗҫ сутса 40.000 тенкӗ тупӑш илнӗ. Ҫавӑн пекех Яманкассинчи Доронин ячӗпе тӑракан колоз та государствӑна 12 центнер кишӗр, 6 центнер хӑяр панӑ.

И. МАКСИМОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 1-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Кӑнтӑр фронтӗнчи ҫарсем сентябрӗн 1-мӗшӗнче ирхине, тул ҫутӑлнӑ тӗле, нимӗҫсен ТАГАНРОГ патӗнчи группин ҫавӑрса илнӗ чаҫӗсене йӑлтах пӗтерсе хунӑ. Пирӗн ҫарсем наступлени туса пынипе тата тӑшманӑн Таганрог патӗнчи группине пӗтерсе пӑрахнипе нимӗҫсен 17-мӗш, 111-мӗш, 294-мӗш пехотнӑй дивизийӗсене тата 15-мӗш авиаполевой дивизине аркатса тӑкнӑ. Тӑшманӑн 304-мӗш, 336-мӗш пехотнӑй дивизийӗсем тата 13-мӗш танковӑй дивизийӗ йывӑр поражени тӳснӗ.

Ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн 212 самолетне, 537 танкне, тӗрлӗ калибрлӑ 494 туппине, 1500 пулеметне, 3600 автомашинине, горючин 10 складне тата боеприпассен 29 складне пӗтерсе тӑкнӑ.

Тӑшманӑн вӗлернӗ салтакӗсемпе офицерӗсене кӑна илсен те, унӑн 35.000 ҫынтан ытла пӗтнӗ.

Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: танксем—95, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—198, минометсем—217, пулеметсем—409, автомашинӑсем—594, боеприпассен складӗсем—22.

Нимӗҫсен 5100 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Малалла тапӑнса пырса, Кӑнтӑр фронтӗнчи ҫарсем сентябрӗн 1-мӗшӗнче 6 километртан пуҫласа 10 километр таран малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра Донбасра КРАСНЫЙ ЛУЧ хулипе СНЕЖНОЕ хулине, ҫавӑн пекех тата ШТЕРОВКА станцине йышӑнса илнӗ.

СМОЛЕНСК енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла ӑнӑҫлӑн тапӑнса пынӑ, 7 километртан пуҫласа 12 километр таран малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла, вӑл шутра ДОРОГОБУЖ хулине, йышӑнса илнӗ.

Пирӗн БРЯНСК хулинчен кӑнтӑртарахра наступлени туса пыракан ҫарсем уйрӑм участокра 6 километртан пуҫласа 10 километр таран малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла, вӑл шутра КОМАРИЧИ хулине, йышӑнса илнӗ.

ХАРЬКОВРАН хӗвеланӑҫнерехри тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри районра пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса ҫапӑҫнӑ, уйрӑм участоксенче каллех малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ.

Августӑн 31-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 66 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 90 самолетне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 90 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Смоленск енче пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла, вӑл шутра Дорогобуж хулине, йышӑнса илнӗ. Тӑшман унта резервсем куҫарса пырать те вӗсене ҫул ҫинчен тӳрех контратакӑсене кӗртсе ярать. Пӗр участокра нимӗҫ пехотин пӗр полкӗ, темиҫе вунӑ танк пулӑшнипе, пирӗн наступлени тӑвакан чаҫсене хирӗҫ атакӑлама хӑтланнӑ. Совет артиллерийӗн пӗтерекен вут-хӗмӗ айне пулса, нимӗҫсем васкасах каялла чакнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн темиҫе ҫӗр салтакпа офицер вилли выртса юлнӑ тата ҫунса кайнӑ е персе ҫӗмӗрнӗ 30 танкӗ тӑрса юлнӑ.

Ельня хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, малалла куҫса пынӑ. Кун каҫиччен хи ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 3000 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ. 48 тупӑ, грузсем турттарса пыракан 250 автомашинӑпа лава пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 6 танк, 23 тупӑ, 110 пулемет тата автоматсемпе винтовкӑсем нумай тытса илнӗ.

Сывлӑшри ҫапӑҫусенче пирӗн летчиксем тӑшманӑн 41 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Пирӗн Брянск хулинчен кӑнтӑртарахра наступлени туса пыракан ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ.

Севск хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединенин чаҫӗсем, тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, Комаричи хулипе чугун ҫул станцине тытса илнӗ. Севск хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн боецсем тӑшманӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ. Нимӗҫсене хаяррӑн ярса, пирӗн чаҫсем вӗсене питех те хӑвӑрттӑн пырса ҫапнӑ та каялла ывӑтса янӑ, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене йышӑнса илнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем Глуховпа Рыльск хулисене йышӑнса илнӗ хыҫҫӑн малалла ӑнӑҫлӑн тапӑнса пынӑ. Кун каҫиччен 2400 гитлеровеца вӗлернӗ, нимӗҫсен 9 танкне, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшмантан 49 тупӑ, 24 миномет, 142 пулемет, 10 радиостанци тата тӗрлӗрен 14 склад тытса илнӗ. Нимӗҫсен 779 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнчи ҫарсем нимӗҫсен Таганрог патӗнчи группин ҫавӑрса илнӗ чаҫӗсене йӑлтах пӗтерсе пӑрахнӑ та халӗ малалла тапӑнса пыраҫҫӗ. Сентябрӗн 1-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра Донбасра Красный Луч хулипе Снежное хулине, ҫавӑн пекех тата Шторовка станцине йышӑнса илнӗ.

Таганрог районӗнче нимӗҫсем ҫынсем тӗлӗшпе те, техника енчен те питех те пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Ҫавна пула вӗсем Кӑнтӑрти фронта васкасах ҫӗнӗ чаҫсем куҫарса пыраҫҫӗ. Пирӗн авиаци тӑшманӑн фронт линийӗ патнелле пыракан ҫав чаҫӗсене татти-сыпписӗр пыра-пыра ҫапать. Бомбӑсем пӑрахнине пула, кун каҫиччен нимӗҫсен чугун ҫулпа пыракан темиҫе эшелонне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, тӑшман пехоти ларса пыракан 100 автомашинӑна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче пирӗн летчиксем нимӗҫсен 25 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Харьковран хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса ҫапӑҫнӑ, малалла куҫса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Пӗр участокра тӑшман танкӗсемпе пехоти чылай контратакӑсем тунӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янӑ, тӑшмана пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Пирӗн артиллеристсем, минометчиксем тата бронебойщиксем нимӗҫсен 16 танкне, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 5 туппине тата 100 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 800 вилли ытла выртса юлнӑ.

Харьковран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем тӑшманӑн вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ темиҫе пунктне йышӑнса илнӗ. Нимӗҫсен 300 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

Украинӑна ирӗке кӑларасшӑн пыракан ҫапӑҫусенче совет боецӗсем питех те паттӑррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Клочкин автоматчик тӑшман пулемечӗ персе тӑракан вырӑн патне шуса ҫитнӗ те нимӗҫсен 2 пулеметчикне вӗлернӗ, виҫҫӗмӗшне тыткӑна илнӗ, вара ӑна тытса илнӗ пулемечӗпе пӗрлех хӑйӗн чаҫне ҫитерсе панӑ. Танксене пемелли тупӑсен гварди лейтенанчӗ Димура ертсе пыракан взвочӗ, уҫӑ позицирен персе, тӑшманӑн 3 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Гварди красноармеецӗ Тятин нимӗҫсен траншейи патне курӑнмасӑр пырса тухнӑ та, гранатӑсем вӑркӑнтарса, 20 гитлеровеца вӗлернӗ. Тюшин красноармеец танксене пемелли пӑшалпа нимӗҫ самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Хура тинӗс флочӗн авиацийӗ тӑшманӑн десант антармалли хӑвӑрт ҫӳрекен икӗ баржине, пӗр мотошхунине тата хуралта ҫӳрекен катерне шыва путарнӑ.

* * *

Минск облаҫӗнчи партизансен Железняк ячӗпе тӑракан отрячӗ халӑх пурӑнакан пӗр пунктра вырнаҫса тӑнӑ нимӗҫ гарнизонне хӑюллӑн тапӑннӑ. Партизансем хаяр ҫапӑҫура тӑшманӑн 90 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Нимӗҫсен 48 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ, вӑл шутра пӗр тупӑ, 2 миномет, 7 пулемет, 113 автоматпа винтовка, боеприпассем тиенӗ 10 лав тата пӗр радиостанци пур.

* * *

Нимӗҫсен инҫене вӗҫекен разведчикӗсен 121-мӗш отрядӗнчи тыткӑна лекнӗ летчик-наблюдатель Лотарь Губерт лейтенант ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Летчиксем фронтри ӗҫсен лару-тӑрӑвне пехотинецсенчен лайӑхрах пӗлеҫҫӗ. Пире кашни вӗҫев умӗнех карттӑсем ҫине фронт линине ӳкерсе илме тиветчӗ. Эпир нимӗҫ ҫарӗсем мӗнле васкаса каялла чакнине курса тӑнӑ. Халӗ ӗнтӗ нимӗҫ ҫарӗсем Российӑра уйрӑм инкексем кӑна тӳсеҫҫӗ тесе калаҫма та ҫуккине кашниех лайӑх пӗлсе тӑрать. Эпир ӑҫта чарӑнассине халӗ никам та пӗлмест, мӗншӗн тесен пуҫарулӑх вырӑссен аллинче. Офицерсем хӑйсем хушшинче ҫапла каласаҫҫӗ: «Спассипа хамӑр шӑпана: пӗр Хӗвелтухӑҫӗнче кӑна инкек куратпӑр-ха. Нимӗҫ ҫарӗсемпе ҫак усал вӑхӑтра Хӗвеланӑҫӗнче те вӑрҫӑ ӗҫӗсем пулса пынӑ пулсан, мӗн пулса тӑнӑ пулӗччӗ-ши?»—теҫҫӗ вӗсем. Пурте ҫапла шутлаҫҫӗ: «Ун чухне вара нимӗҫсене катастрофа питех те час ҫитсе ҫапнӑ пулӗччӗ», теҫҫӗ.

СЕНТЯБРӖН 2-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Воронеж фронтӗнчи ҫарсем сентябрӗн 2-мӗшӗнче Украинӑри облаҫӑн паха центрне—СУМЫ хулине йышӑнса илнӗ.

Пирӗн БРЯНСК хулинчен кӑнтӑртарахра наступлени туса пыракан ҫарсем халӑх пурӑнакан 130 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра КРОЛЕВЕЦ хулине, Сумы облаҫӗнчи ЯМПОЛЬ район центрне, КУРСК облаҫӗнчи ГЛУШКОВО район центрне йышӑннӑ. Ҫапла ӗнтӗ, Курск облаҫне нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларнӑ.

Донбасра пирӗн ҫарсем ҫаплах ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пынӑ, ЛИСИЧАНСК хулине, ВОРОШИЛОВСК хулине, ЧИСТЯКОВО хулине, ҪӖНӖ ДОНБАСС хулине, СЛАВЯНОСЕРБСК район центрне тата халӑх пурӑнакан ҫак пысӑк пунктсене: НИЖНЕЕ ЧЕРКАССКОЕ, РОДАКОВО, ПЕТРОВО—КРАСНОСЕЛЬЕ, КРАСНЫЙ КУТ пункчӗсене йышӑнса илнӗ.

Азов тинӗсӗн ҫыранӗ тӑрӑх наступлени туса пыракан ҫарсем БУДЕННОВКА хулине йышӑнса илнӗ.

СМОЛЕНСК енче пирӗн ҫарсем, малалла тапӑнса пырса, уйрӑм участоксенче 6 километртан пуҫласа 10 километр таран малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла йышӑнса илнӗ.

ХАРЬКОВРАН хӗвеланӑҫнерехри районра пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса тата малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ.

Сентябрӗн 1-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 108 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 51 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Воронеж фронтӗнчи ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, паян Сумы хулине йышӑнса илнӗ. Украина республикинчи облаҫӑн паха центрне нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ.

Харьковран хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем нимӗҫсем хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Ҫав пунктсенчен пӗриншӗн пынӑ ҫапӑҫусенче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 600 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, 12 танк персе ҫӗмӗрнӗ тата тӑшманӑн 10 туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра тӑшман хӑйӗн 20 танкне тата пӗр батальон пехотине контратакӑна кӗртсе янӑ. Совет артиллерисчӗсем тӑшмана хӑватлӑн пеме пуҫланӑ, 9 танк тата 200 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсене васкасах каялла чакма лекнӗ.

Харьковран кӑнтӑртарахра пӗр чаҫри боецсем, татӑклӑн атакӑласа, тӑшмана вӑйлӑн ҫирӗплетнӗ пунктран хӗссе кӑларнӑ. Ҫак ҫапӑҫура 10 танк тата темиҫе ҫӗр гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен «тигр» йышши йывӑр танкне, 5 тупӑ тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Брянск хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах ӑнӑҫлӑн тапӑнса пынӑ. Кун каҫиччен хи ҫапӑҫусенче пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан 130 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра Кролевец хулипе чугун ҫул станцине, Ямполь район центрӗпе чугун ҫул станцине, Глушково район центрне йышӑннӑ.

Севск хулинчен ҫурҫӗртерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем тӑшман контратакисене сире-сире ярса, нимӗҫсен 1.200 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав участокра икӗ кун хушши пынӑ ҫапӑҫусенче 24 тупӑ, сыхӑну пурлӑхӗн складне, боеприпассен 8 складне, 2 продовольстви складне тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. 100 гитлеровеца ытла тыткӑна илнӗ.

Севск хулинчен кӑнтӑр хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Совет чаҫӗсем тӑшманӑн лӳчӗркеннӗ дивизийӗсене татти-сыпписӗр пыра-пыра ҫапаҫҫӗ, вӗсене хыҫҫӑнах хӑваласа пыракан совет чаҫӗсенчен татӑлса тарса, хӑйсен оборонине йӗркелеме памаҫҫӗ. Пӗр соединени боецӗсем нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 2000 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, 11 танк, 16 тупӑ тата 96 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Донбасра пирӗн ҫарсем, малалла тапӑнса пырса, Лисичанск хулине, Ворошиловск хулине, Чистяково хулине, Ҫӗнӗ Донбасс хулине, Славяносербск район центрне тата халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене нумай йышӑнса илнӗ.

Донбасс хулисемпе шахтисене ирӗке кӑларса пырса, пирӗн ҫарсем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене пӗтерес ӗҫе хӑйсене хӗрхенмесӗр туса пыраҫҫӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшман оборонине татса кӗрсе, хӑвӑрттӑн малалла куҫса пынӑ. Нимӗҫсене вӗсем чылай вӑхӑт хушши хаяррӑн хӳтӗлесе тӑнӑ нумай паха пунктсенчен ҫапса кӑларнӑ. Совет артиллерийӗ тӑшманӑн темӗн чухлӗ дзотне тата ытти оборонӑллӑ сооруженийӗсене ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Нимӗҫ ҫарӗсем ҫынсем тӗлӗшпе те, техника енӗпе те пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Тӑшмантан трофейӑсем нумай тытса илнӗ.

Азов тинӗс ҫыранӗнче пӗр часть, тӑшмана хӑваласа пырса, 600 гитлеровеца вӗлерсе тӑкнӑ, 9 тупӑ, 64 пулемет, 40 автомашина тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Смоленск енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Дорогобуж хулинчен хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсем темиҫе хутчен те контратака тунӑ. Анчах та 400 салтакпа офицерне ҫити ҫухатнӑ хыҫҫӑн вӗсем пӗр йӗркесӗр каялла чакнӑ. Ельня хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра тӑшман, ҫӗнӗ чаҫсем илсе пырса, хаяррӑн хирӗҫ тӑрать. Анчах та пирӗн малалла тапӑнса пыракан чаҫсене чарма хӑтланни ӑнӑҫман. Пирӗн ҫарсем татах малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Кун каҫиччен нимӗҫсен 4000 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе тӑкнӑ. 44 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, 33 хир туппине, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 12 тупа, ҫар грузӗсем турттарса пыракан 140 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшмантан 38 тупӑ, ултӑ кӗпҫеллӗ 14 миномет, 84 пулемет, 14 радиостанци, 6 склад, боеприпассем тиенӗ 15 вагон тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Барановичи облаҫӗнче кӗрешекен партизансен темиҫе отрячӗ тӑшманпа уйӑх хушши хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсем партизансене пӗтерме пехотӑн пысӑк вӑйӗсене янӑ. Анчах совет патриочӗсем, тӑшмана сасартӑк пыра-пыра ҫапса, 2000 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ е амантнӑ. Нимӗҫсен 2 танкне, 2 бронемашинине, 60 грузовой тата ҫӑмӑл автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Барановичи облаҫӗнчи партизансем ҫав вӑхӑтрах нимӗҫсен 37 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Ҫак кунсенче Хӗрлӗ Ҫар енне нимӗҫсен 56-мӗш пехотнӑй дивизийӗсенче тӑнӑ 6 салтак тарса каҫнӑ. Ку салтаксем пурте французсем, Эльзас ҫыннисем. Марсель Л. тата Жан Н. ҫапла каласа панӑ: «Январь уйӑхӗнче нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем француз ҫамрӑкӗсене ҫара илме пуҫларӗҫ. Эльзас халӑхӗ ҫак мобилизацие хирӗҫ хаяррӑн тӑчӗ. Ҫамрӑксем, призывран пӑрӑнса, пинӗ-пинӗпе тарса пытанчӗҫ. Нимӗҫсем, тискер мерӑсем йышӑнса, Эльзас халӑхӗ гитлеровецсене хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкма хӑтланчӗҫ. Вырӑнти нумай ҫынна хупса лартрӗҫ. Нимӗҫ оккупанчӗсем Хагенталь ялӗнчи ҫынсене ҫуррине ытла концентрациллӗ лагере хӑваласа кайрӗҫ. Балерсдорф ялӗнче гитлеровецсем Вист ятлӑ икӗ тӑвана персе пӑрахрӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсем нимӗҫ ҫарӗнче тӑма килӗшмен. Мюньгаузен ҫывӑхӗнчи Сент Людвиг ялӗнче нимӗҫсем Хениг хресченӗн ҫемйине хупса лартрӗҫ, мӗншӗн тесен унӑн ывӑлӗ, мобилизацирен пӑрӑнса, Швейцарие тухса тарнӑ. Анчах та Эльзас халӑхӗ ҫавӑн пек хаяр террор умӗнче те чӑркуҫланса лармарӗ, нимӗҫсене пӑхӑнмарӗ. Нимӗҫ

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

оккупанчĕсене Эльзас халăхĕ чунтан тарăхса кураймасть. Эльзас хулисемпе ялĕсенче пур çĕрте те захватчиксене хирĕç хаяр кĕрешӳ пырать. Патриотсен ушкăнĕсем чугун çул сооруженийĕсене сирпĕнтере-сирпĕнтере ярассĕ, çар склачĕсене вут тивертсе çунтара-çунтара ярассĕ, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тата гестаповецсене вĕлерессĕ.

Эпир Российăпа Германи фронтне май килсенех Хĕрлĕ Çар енне куçас шухăшпа килтĕмĕр. Фронтра эпир мĕн пурĕ те темиçе кун кăна пулăмăр, часах вырăссем енне тарса каçрăмăр. Нимĕç çарĕнче тăрассинчен хăтăлма пултарнăшăн эпир темĕн пек савăнатпăр! Халĕ эпир кирек хăш самантра та алла пăшал илсе нимĕçсене хирĕç çапăçма хатĕр».

Пирĕн авиаци Конотоп, Ворожба, Дебальцево, Енакиево, Ясиноватая чугун çул узелĕсене тапăннă

Сентябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Конотоп, Ворожба, Дебальцево, Енакиево, Ясиноватая чугун çул узелĕсенчи нимĕçсен çар эшелонĕсем çине, тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсемпе техники çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула пушарсем нумай тухнă. Тăшманăн станцири поезчĕсем тата çар склачĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Çав каçах пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем нимĕçсен Смоленск енчи, çавăн пекех тата Харьков хулинчен хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Пирĕн пĕр самолет хăйĕн аэродромне таврăнман.

Ĕçре паттăр фронтовиксемпе танлашар!

Шупашкарти чăлха фабрикинче çĕрлехи сменăра ĕçлекенсем ĕнер ирхине, ĕç пĕтнĕ хыççăн, митинг туса ирттерчĕç. Парторганизаци секретарĕ Каменецкий юлташ Хĕрлĕ Çарăн юлашки кунсенчи чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерчĕ, Сталин юлташăн Таганрог, Глухов, Рыльск, Ельня, Севск хулисене ирĕке кăларнă паттăр войскăсене саламласа панă приказĕпе паллаштарчĕ.

— Хĕрлĕ Çар фронтра кунсерен çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвать. Совет генералĕсемпе офицерĕсем тата красноармеецĕсем, гениллĕ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, тăван çĕршыври хуласемпе халăх пурăнакан нумай пунктсене ирĕке кăларасçĕ,—тет Каменецкий юлташ.—Пирĕн пур ĕçре те хамăрăн паттăр фронтовиксемпе танлашма тăрăшмалла.

Фабрика директорĕ Богуславская юлташ фронтран килекен савăнăçлă хыпарсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме, материалпа чĕртаварсене пĕлсе расходлама, перекетлĕх режимне çирĕппĕн тытса пыма хушни çинчен калать. Ун хыççăн фабрикăри чи паллă стахановецсем тухса каласрĕç. Аслă мастер Бэруля машинăсемпе оборудованисене типтерлĕ тыткалама, вĕсемпе туллин усă курса, продукци пахалăхне лайăхлатма чĕнчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе савăнса, Виноградова стахановка цехри работницăсене фронта пур енлĕн пулăшса тăма чĕнчĕ, хăй яланах ĕç нормине 200 процент тултарма пулчĕ.

А. НЕКРАСОВА.

Мĕнпур ĕçе хăвăртлатрĕç

ЭЛĔК, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, районри колхозсем пĕтĕм ĕçе хăвăртлатрĕç. Халĕ хĕрлĕ обозсем организацилесе государствăна тырă леçессĕ. Ехремкасси ялсоветне кĕрекен колхозсем ĕнер хĕрлĕ обозпа хатĕрлев пунктне 41 лав, Кармалти «Комсомолец» колхоз 10 лав тырă леçрĕç. «Большевик» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те государствăна çак кунсенче 135 центнер тырă панă.

Енерхи кун тĕлне тырă вырас ĕçе район 98,8 процент пурнăçларĕ. Крымзарайка, Пиçенер, Тени тата ытти ялсоветсем те тырпулсене пĕтĕмĕшпех вырса пуçтарчĕç. Сталин тата Горький ячĕсемпе тăракан, «Токташ» колхозсем вырса пуçтарнă тырпулăн 70 процентне капана хывнă. «Шуçăм» колхоз ыраш çапса пĕтерчĕ, кĕраки акса пĕтерет. Сеялкăсемпе акакан Тарасов, Афанасьев юлташсем нормăна 150 процент тултарса пычĕç. «16-ый Партсъезд» колхоз мĕнпур тырăсене капана хыврĕ.

Республика уйхирĕсенче

Чăваш республикинчи колхозсенче тырпулсене пухса кĕртес тата кĕраки тăвас ĕçсем сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан СВОДКА (процентпа)

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсене пурĕ вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă	Кĕрхи тырăсем акнă
Вăрмар	100,0	29,7	23,0	85,9
Сĕнтĕрвăрри	100,0	40,1	24,2	71,8
Сĕнтĕр	100,0	27,2	15,0	97,5
Шăмăршă	100,0	74,8	20,1	60,7
Хĕрлĕ Чутай	100,0	37,7	25,0	56,9
Советски	99,0	30,3	16,9	87,1
Элĕк	98,9	28,1	16,6	86,4
Вăрнар	98,9	41,9	11,2	87,1
Куславкка	98,7	42,8	28,5	66,4
Шупашкар	98,5	35,4	23,4	98,7
Октябрьски	98,4	31,1	22,3	72,2
Çĕрпӳ	98,4	35,0	25,0	95,0
Етĕрне	98,1	57,0	26,1	73,7
Калинино	97,7	29,4	15,3	86,6
Йĕпреç	97,4	39,0	28,1	47,1
Елчĕк	96,5	32,4	17,0	88,6
Комсомольски	96,3	42,6	16,1	66,2
Ишлей	96,0	29,8	25,7	91,7
Первомайски	95,9	20,1	15,1	62,4
Красноармейски	95,8	31,1	20,3	91,6
Канаш	95,1	23,4	17,3	69,8
Шăхасан	93,6	29,8	23,8	80,1
Тăвай	92,8	23,0	15,1	73,5
Çĕмĕрле	91,1	50,1	22,4	63,5
Чкаловски	88,2	21,1	14,9	65,3
Улатăр	84,8	79,0	27,9	52,3
Пăрачкав	71,4	44,4	17,0	42,8
Кувакино	70,5	50,7	24,5	49,1
Шупашкар хули	100,0	47,5	22,0	91,6
ЧАССР тăрăх	94,9	35,8	20,2	75,7
Августăн 25-мĕшĕ тĕлне пулнă	83,9	27,7	14,9	47,1

Кĕлте кӳрес ĕçе хăвăртлатмалла

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пур колхозсем те тырă вырса пĕтерчĕç. Халĕ кĕлте турттарса капана хывас, авăн çапас ĕçсем кунран кун вăйланса пымалла. Уйхирти çĕмелсенче халĕ пирĕн 9.807 гектар тырă ларать, вырнă тыррăн 3.939 гектарне çеç çапса пуçтарнă-ха.

Ĕçтухăçлăхне нумай хут ӳстерсе, вырнă тырпула хăвăртрах капана хывас пулать, авăн çапас ĕçе кунран кунах вăйлатса пымалла. Калинин ячĕпе тăракан колхозра комбайнпа вырнă тырра 3—4 талăк хушши уйра выртарнă. Çавăн пек ответсăрлăха тӳсме çук. Колхоз председателĕсен тырпула тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн ответлăха туйса, ĕçлемелле.

В. ШИПКОЛИН,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Графика ирттерсе тултартăмăр

КӲКЕÇ, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тырă памалли 1943 çулхи обязательствăна районра пуринчен малтан «Зерно» колхоз тултарчĕ. Вăл государствăна 96,81 центнер тырă парса çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçларĕ. Государствăна тырă парас ĕçе çак кунсенчех Карачура ялсоветĕнчи «Коминтерн», «Осоавиахим» тата ытти хăшпĕр колхозсем пурнăçлаççĕ. Пирĕн районри колхозсем государствăна тырă памалли августăн 25-мĕшĕпе сентябрĕн 1-мĕшĕ хушшинчи графике ирттерсе тултарчĕç: 200 тонна памалла пулнă пулсан, район иртнĕ пилĕккунлăхра государствăна 269 тонна тырă пачĕ.

Иккассинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем государство умĕнчи обязательствăсене хăвăртрах парса татассишĕн тăрăшаççĕ. Çак иртнĕ кунсенче Иккасси колхозĕ государствăна хăй пĕччен 18 тонна тырă леçсе панă.

И. ВЕДИН.

Ĕçе ярăхтарса янăшăн суда панă

Йĕпреç районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз унта С. Данилов председатель пулса ĕçленĕ вăхăтра питех те ярăхса кайнă. Колхоз уйри тырпула пухса кĕртме хатĕрленмен. Данилов район центрне: «Уйри тырпула пухса кĕртме хатĕрленнĕ», тесе суйса пĕлтернĕ. Колхозăн 2 жнейка, 2 молотилка, 2 лобогрейка пулнă. Вĕсене юсаман. Пĕр молотилкине 25 центнер тыралла сутнă пулнă, теприне кӳршĕ яла парса янă. Данилов кирлĕ пек ертсе пыманнине пула колхоз тырă вырма августăн 7-мĕшĕнче тин тухнă. Çав вăхăта та пĕр жнейкăпа пĕр лобогрейкăна çеç хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ. Данилов государствăна пама хатĕрленĕ 48 центнер йĕтĕне çĕртсе янă.

Çакăн пек ответсăрла ĕçленĕшĕн Данилова суда панă.

Колхоз уйри тырпула пухса кĕртес ĕçре халь хĕрӳллĕн ĕçлет.

П. КУРАКОВ.

Тырпул хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн районсем хушшинче пуçланнă социализмлă ăмăрту сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан СВОДКА

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Сĕнтĕрвăрри	1
Вăрнар	2
Куславкка	3
Шупашкар	4
Çĕрпӳ	5
Красноармейски	6
Вăрмар	7
Октябрьски	8
Советски	9
Етĕрне	10
Канаш	11
Çĕмĕрле	12
Йĕпреç	13
Ишлей	14
Комсомольски	15
Сĕнтĕр	16
Шăхасан	17
Первомайски	18
Хĕрлĕ Чутай	19
Калинино	20
Улатăр	21
Элĕк	22
Тăвай	23
Елчĕк	24
Чкаловски	25
Кувакино	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

* *

Государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçлассишĕн пыракан социализмлă ăмăртура темиçе пилĕккунлăх хушши ĕнтĕ Сĕнтĕрвăрри районĕ пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Ку район государствăна тырă памалли плана 46,9 процент пурнăçа кĕртнĕ. Районри хăшпĕр колхозсем государствăна тырпул тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем пĕтĕмĕшпех парса татнă ĕнтĕ.

Тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн пыракан социализмлă ăмăртура Вăрнар районĕнчи колхозсем паха çитĕнӳсем турĕç. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район тырпул хатĕрлемелли çулталăкри плана 34,4 процент тултарса, иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Государствăна тырă парасси Куславкка районĕнче аван пулса пырать.

Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче ăнăçлă наступлени туса пынипе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсен производствăллă çĕкленĕвне çав районсен руководителĕсем лайăх пуçарса пыраççĕ, Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса тăрассишĕн ăмăрту пуçласа янă Вăрнар районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕ çинчен вĕсем хăйсен районĕсенчи колхозниксене тĕрĕс ăнлантарса панă.

Анчах та хăшпĕр районсен руководителĕсем: Калинин районĕн (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кудряшов юлташ, райисполком председателĕ Валеев юлташ), Элĕк районĕн (Федоровпа Филимонов юлташсем), Тăвай районĕн (Салминпа Федоров юлташсем) колхозсен ăмăртăвне ертсе пырасси çине çиелтен пăхрĕç. Вĕсем Вăрнар районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксене ăнлантарса паман, партипе комсомол тата колхоз активне тырпул хатĕрлев планне срокчен пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешĕве мобилизацилемен. Тĕрĕссипе халĕ ĕнтĕ çав районсем республикăри чи кая юлнă Кувакино, Пăрачкав районĕсем патне кайса ларчĕç, вĕсем пĕтĕм республикăна каялла туртаççĕ.

Хатĕрлев пункчĕсене тырă турттармалли графика çав районсенчи колхозсем пилĕккунлăхран пилĕккунлăхах тултармасăр пыраççĕ, парти райкомĕсен секретарĕсем, райисполкомсен председателĕсем тата Наркомзагăн районсенчи уполномоченнăйĕсем, колхоз председателĕсенчен заданисене пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртме ыйтас вырăнне, çав намăсла фактсем çине лăпкăн пăхса ларассĕ.

Çĕнĕ производствăсем

Нумай пулмасть, ВКП(б) Красноармейски райкомĕ районри промышленность мĕнле ĕçлени çинчен сӳтсе-яврĕ. Вăл ыйтупа райком бюровĕ тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Райком кăтартса панипе халĕ чылай артельсенче çĕнĕ производствăсем организациленĕ.

Райпромкомбинат шкулсем валли пурă, Йĕкерти «Трудовик» артель, Карайри «Комсомол» артель кашăксем, урапасем, Енĕшкассинчи «Стрела» артель йĕвенсем тума тытăнчĕç. «Комсомол» артель 6 пин кашăк, 134 стан урапа туса хатĕрлерĕ.

(ХАМĂР ИНФ.).

Орденоносец Багров юлташăн урокĕсенче

— Пĕлетĕр-и, пире кам вĕрентет? —савăннипе çапла ыйтрĕ шкултан таврăнакан пионерка Нина Васильева.

— Ватă учитель, орденлăскер!

Нина Ленинградран куçса килнĕ. Унта вăл икĕ çул вĕреннĕ. Кăçал виççĕмĕш класа çӳреме пуçларĕ. Ленинград хĕрачи чаплă учительпе вĕренме пелей тивнишĕн питех те савăннă.

Сĕнтĕр вăтам шкулĕнчи виççĕмĕш класра РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ Ленин орденне илнĕ Матвей Иванович Багров юлташ вĕрентет. Халăха çутта кăларас ĕçре кăçалхипе 50-мĕш çул ĕçлет вăл.

Çур ĕмĕр! Кĕске вăхăт мар. Çак вăхăтра Матвей Иванович ачасене вĕрентес мастерлăхăн пуян опытне пухнă, çĕршер çамрăка ăслăлăхпа пурнăç çулĕ çине кăларнă. Вăл вĕрентнĕ чылай çамрăксем ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ.

Паян вăл вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренӳ çулĕн малтанхи кунне кăтартуллăн ирттерчĕ. Матвей Ивановичăн урокĕсенче эпир те пултăмăр.

Арифметика урокĕ пуçланас умĕн Матвей Иванович кĕске калаçу ирттерчĕ. Вăл ачасене хальхи йывăр кунсем çинчен, шкулта, килте, урамра йĕркеллĕ тытмалли çинчен астутарчĕ.

— Дисциплинăллă пулса, шкула пĕр сиктермесĕр йĕркеллĕ çӳресен, тăрăшса вĕренсен, кирек хăш ача та вĕренӳре ăнăçлăн ĕлкĕрсе пыма пултарать,—терĕ учитель.

Вырăс чĕлхи урокĕ. «Праздник» ятлă статьяна вуларĕç. Унта «герой» сăмах тĕл пулчĕ. Матвей Иванович часах отечественнăй аслă вăрçă çине куçрĕ, геройсем çинчен кĕскен пĕлтерчĕ, çак аслă вăрçăра чăваш халăхĕн икĕ пиче ярăн ывăлĕ Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илни çинчен каласа пачĕ.

— Çапăçура çеç мар, ĕçре те геройсем çитĕнеççĕ,—тет Багров юлташ.—Отлично вĕренсен, ачасем, сире те вĕренӳри паттăрсем теççĕ. Ачасен пичĕсенче савăнăç палăрать. Класс татах та шăпланать.

Юлашки урокра чăваш чĕлхипе, географипе вĕренчĕç. Матвей Иванович урокĕсене пурне те чĕрĕ те интереслă ирттерчĕ. Юратнă учителĕн кашни сăмахне ачасем тимлĕн итлерĕç, астуса юлма тăрăшрĕç.

Çитмĕл çула çывхарать пулин те, Матвей Иванович хăйне патваррăн тытать, ĕçре чĕрĕлĕх кăтартать. Çĕнĕ вĕренӳ çулне кăтартуллăн хатĕрленес тесе, вăл хăй аллине пуртăпа сава тытса ĕçленĕ. Шкул директорĕпе Г. Ефремов юлташпа пĕрле 16 парта юсанă.

— Ĕçленĕçемĕн çине тăрса ĕçлес килет. Çак йывăр вăхăтра çĕршыва ытларах усă тăвас килет. Хĕрлĕ Çар кашни кун çĕнĕ те чаплă çĕнтерӳсем тăвать. Партипе правительство, вăрçă вăхăчĕ пулин те, учительсемшĕн тăванла тăрăшаççĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ халăха çутта кăларас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума пире вăй-хăват хушса пачĕ,—тет Багров юлташ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче Матвей Иванович хăйĕн класĕнчи ачасене пурне те отлично вĕрентме ĕмĕтленет. Çак ырă ĕмĕте ăнăçлăн пурнăçа кĕртме ăна çирĕп сывлăхпа ыксĕлми вăйхал сунар! Пархатарлă ирттĕр унăн аллăмĕш вĕренӳ çулĕ!

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).
СĔНТĔР, сентябрĕн 1-мĕшĕ.

Фронтовиксен ачисемпе эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен ачисене пулăшаççĕ

ÇĔРПӲ, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтовиксен ачисемпе эвакуаци йĕркипе района куçса килнĕ çынсен ачисене пурне те вĕренĕве явăçтарас тесе, Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозниксем патриотла ĕç пуçарчĕç. Вĕсем çарти тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен шкулсенче вĕренекен ачисене пулăшма кĕске вăхăт хушшинче 9 мăшăр çăматă, 31 мăшăр çăм алшиш, 27 мăшăр носки, 8 тир, 19 çĕлĕк, 30 кĕпе, 10 костюм, 19 брюки, 4 пальто, 16 фуфайка тата 42 пăт тырă, 36 пăт çĕрулми пухрĕç.

Лĕпсер çыннисен паха пуçарăвне районри ытти ялсовечĕсенчи ĕççыннисем те хăвăрт йышăнса илчĕç. «Новая жизнь» колхозра (колхоз председателĕ Романов юлташ) 9 ярăла пухнă. Çапла вара районĕпе шкул ачисем валли пурĕ 1238 ярăла, 2500 тенкĕ укçа, 138 килограмм çăм пухнă.

Олимпиадăна хатĕрленеççĕ

Шупашкарти чăлхасем çыхакан фабрикăра художествăллă пултарулăх кружокне организацилени нумаях пулмасть. Ăна комсомолăн фабрикăри пуçламĕш организацийĕ стахановец-коммунист Асеева юлташ ертсе пырать. Халĕ кружок членĕсем Шупашкар хулинче пулса иртекен художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленеççĕ. Çавна май кружок шефа илнĕ госпитальре, Крупская ячĕпе тăракан садра, Хĕрлĕ Çар çуртĕнче концертсем пачĕ. Пĕчченшерĕн тухса юрлакансем кăмăла каякан юрăсем юрлаççĕ. Дубровин, Симонова, Сирота декламаторсем сăвăсене килĕшӳллĕн вулаççĕ.

А. КРАСНОВ.

Хула совечĕн сессийĕ

Хулари промышленность предприятисем, промартельсем, учрежденисем тата шкулсем хĕллехи условисенче те лайăх ĕçлетчĕр тесен, хĕллене халех тĕплĕн хатĕрленмелле. Çак ыйтăва сӳтсе-яврĕ Шупашкар хула совечĕн 21-мĕш сессийĕ. Ку ыйтупа сесси хула совет исполком председателĕн Аникин юлташăн докладне итлерĕ, чылай депутатсем тухса каларĕç.

Хулана хĕле хатĕрлес енĕпе тумалли ĕçсенчен пĕри вăл коммуналлă предприятисене, культурăпа медицина учрежденийĕсене, шкулсене, ача яслисене, магазинсене, производство тата пурăнмалли çуртсене юсасси пулать. Ку тĕлĕшпе хулара чылай ĕçсем тунă. Анчах та ремонт ĕçĕсем кирлĕ пек хăвăртлăхпа тата пахалăхпа пулса пыраççĕ теме çук-ха. Водосветра планпа палăртнă тăрăх дизель хуçалăхне юсамалла. Унта халĕ ремонт ĕçĕсем питех те сӳрĕк пыраççĕ. Ку тарана çитсе те хурана вырнаçтарса лартма никĕс туса пĕтермен. Хулара çĕнĕрен шыв колонкисем тăвасси те начар пырать. Мунча юсассине вăрăма хăварнă. План тăрăх ремонт ĕçĕсене сентябрĕн 1-мĕшĕнче туса çитермелле пулнă, халĕ те вĕçлемен-ха.

Пурăнмалли çуртсене юсама тата çĕнĕ çуртсем тума государство укçа-тенкĕ нумай уйăрса панă. Строительство тата хуçалăх организацисем вăл укçа-тенкĕпе пачах та çителĕксĕр усă кураççĕ. Хулара пурăнмалли çуртсене капитальнăй ремонт тăвас плана 40 процент çеç тултарнă. Çуртсене юсасси пир-авăр тĕртекен фабрикăра, 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнче, «Кожупряжь» артелĕнче тата ытти чылай организацисенче начар пырать. «Кожупряжь» артелĕнче хĕле хатĕрленмелли план та çук, çăматăсем йăвалакан цех çуртĕн çийне халĕ те юсама тытăнман. Çуртйĕрсене юсас тĕлĕшпе ĕççыннисем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Ку тĕлĕшпе хулара паха опытсем пур. Анчах вăл опытсене сармаççĕ. Хула совечĕн ялан ĕçлекен комиссисем тата учрежденисенчи партипе профсоюз организацийĕсем чылайĕшĕ ĕççыннисене хĕле хатĕрленес ĕçе явăçтарассишĕн тăрăшмаççĕ.

Çуртсене юсани—хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсен пĕр пайĕ кăна-ха. Коммуналлă предприятисем, шкулсем, учрежденисем, столовăйсем тата ĕççыннисем валли кирлĕ чухлĕ вутă хатĕрлемелле. Вутă хатĕрлес пирки сахал мар калаçнă, анчах вăл ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Хула совет исполкомĕ тата Шупашкар вăрмантпромхозĕ хатĕрленĕ вутта Атăл тăрăх турттарса килмелли лайăх майсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем те вутă хатĕрлесси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Автотранспорт конторин 150 кубла метр хатĕрлемелле пулнă. Вăл çуррине те хатĕрлемен.

Вутă çителĕклĕ пулманни çăкăр комбиначĕн ĕçĕнче чылай чăрмавсем кӳрет. Хула совет исполкомĕн комбината вутă çителĕклĕ таран памалла тăвас пулать.

Хĕллене хатĕрленес енĕпе сутуилӳ организацисем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен пахча-çимĕçсем хатĕрлемелле, вĕсене усрамалли çуртсене, хранилищĕсене юсамалла. Чебторгăн пахча-çимĕçсем 345 пин тенкĕлĕх хатĕрлемелле пулсан, ку таранччен 195 пин тенкĕлĕх кăна договорсем тунă. Хранилищĕсемпе складсене те юсаса пĕтермен. Хулара пахча-çимĕçсене тăварлама кирлĕ ярăласене юсассине организацилемен.

Сесси хулана хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене палăртса хăварчĕ. Вăл мероприятисене вăхăтра тата ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, хула совет исполкомĕн партипе профсоюз организацисен хĕле хатĕрленес ĕçе ĕççыннисен анлă массине явăçтармалла.

Сесси организациллĕ ыйтусем пăхса тухрĕ. Сесси И. Е. Бугаев юлташа хула совет исполком председателĕн пурăнмалли çуртйĕр тата коммуналлă хуçалăх енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулма суйларĕ тата Н. И. Журавлев юлташа суту-илӳ отделĕн заведующийĕ пулма çирĕплетрĕ.

Ют çĕршывсенче

Англи самолечĕсем Берлина тапăнни

Сентябрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсен пысăк вăйĕсем Берлина тапăннă. Самолетсем 45 минут хушшинче Берлин çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем нумай пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă. Хулана пысăк сиен кӳнĕ. (ТАСС).

Дани халăхĕ нимĕçсене хирĕç кĕрешет

Данире гитлерла влаçсем Данин действительнăй слăжбăра тата запасра тăракан пур офицерĕсене те арестленĕ. Дани правительствин членĕсене нумайĕшне тата Данин корольне те хăйсен килĕсенчи арестра тытаççĕ. Дани çĕршывĕн обществаллă деятелĕсене йышлăн тытса хупнă.

Августăн 30-мĕшĕнче Данин хăшпĕр пайĕсенче нимĕçсемпе вырăнти халăх хушшинче хĕçпăшаллă тытăçусем пулса иртнĕ. Чылай хуласенче пурте хутшăннă забастовкăсем пуçланса кайнă. Нимĕçсем Дание Норвегирен васкасах пĕр танковăй дивизи куçарса килнĕ. Юлашки хыпарсем тăрăх, Дани столици Копенгаген хули çывăхĕнчи казармăсенчен пĕринче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Ку казармăра Дани гвардине халĕ çеç илнĕ çамрăксене вырнаçтарнă пулнă. Вĕсем танксене хирĕç тăмалли чăрмавсем туса лартнă. Нимĕç танкĕсен пĕр роти çав загражденине çĕмĕрсе кĕме хăтланнă. Дачансем вĕсене пеме пуçланă, нимĕçсен 3 танкне тата 11 бронемашинине юрăхсăра кăларнă. Гитлеровецсен приказĕ тăрăх халăх пурăнакан пунктсем хушшинче куçса çӳрессине пĕтĕм Данийĕпех чарса лартнă. Августăн 30-мĕшĕнче Данире датчансен пĕр хаçачĕ те тухман. (ТАСС).

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместительне М. М. Литвинов юлташа ССР Союзĕн Куба республикинчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посланникĕн обязанносĕсенчен хăтарса, ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолне А. А. Громыко юлташа çав вăхăтрах ССР Союзĕн Куба республикинчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посланникĕ пулма лартнă.

* * *

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ С. И. Кавтарадзе юлташа Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма уйăрса лартнă.

Пĕлтерӳ

Паян сентябрĕн 4-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Аслă отечественнăй вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе 1-мĕш тема тăрăх агитколлективсене ертсе пыракансен семинарĕ пулса иртет.

Тема çакă пулать:

«Оборонăн Государственный Комитечĕн председателĕ И. В. Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса калани».

Семинара ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **Давтян** юлташ ирттерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Наркомсобесĕ Отечественнăй вăрçăра суккăр пулса юлнă инвалидсене пурне те çакăн çинчен пĕлтерет: 1943 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен Ивановăри баянистсен музыка шкулĕ вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисем йышăнать. Шкула Отечественнăй вăрçă инваличĕсене, пачах суккăр пулса юлнисене, пурне те йышăнаççĕ, вĕренӳ тĕлĕшпе пуçламĕш шкулта вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Çав музыка шкулне вĕренме илнисене пĕтĕмĕшпех государство шучĕпе тытса усраççĕ.

Çав шкула вĕренме кĕмешкĕн райгорсобессене кайса уйрăм документ илмелле.

Шкулăн адресĕ çапла: гор. Иваново, местечко Пустошь, Музыкальная школа.

Завода çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: товаровед (сутас тĕлĕшпе), машинистка-секретарьсем, шутпа контора работникĕсем, кладовщиксем.

Çавăн пекех тата çакăн пек рабочисем кирлĕ: токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, строительствăра ĕçлеме пĕлекен рабочисем, грузчиксем, возчиксем, прачкăсем, подсобнăй рабочисем тата уборщицăсем.

Вахтерсем (охранниксем) кирлĕ, арçынсене те, хĕрарăмсене те йышăнаççĕ. Хватер общежитире. Спецодежда параççĕ.

Çавăн пекех тата тĕрлĕрен специальноçсем тăрăх переквалификантсене йышăнаççĕ (15 çула çитнĕ е унтан иртнĕ учениксене).

11 сехетрен пуçласа 15 сехете çитиччен ыйтса пĕлме пулать. Адрес çапла гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1823

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88